Хусанкай П. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче: [сăвă] / Петĕр Хусанкай // Хусанкай П. Эпир пулнă, пур пулатпăр. – Шупашкар, 1982. – С. 252.

## ПУШ УЙĂХĔН ВĔÇĔНЧЕ

Пăхатăп кăçалхи календаре.
Çак мартăн çирĕм улттăмĕшĕнче
Хурланмалли хыпар вăл пĕлтерет
«Н а р с п и» çырса хăварнă çын çинчен.
Вулатăп эпĕ: «...сăвăç-демократ
Вилни кăçал тултарчĕ хĕрĕх çул...»
Вăл пурнăçсăр пулнишĕн чун макрать,
Ун мухтавне курсан — типет куççуль.
Ун ырă ячĕ вĕçĕмсĕр пырать.
Ик хĕрĕх çул та иртĕ, пиллĕк те...
Паян чысра вăл åслă çĕршывра,
Ыран åна тĕнче тӳпи кĕтет.
Чăваш хăйне «чăваш эп» тенĕ чух
Кĕнекери кăвар пек сăмаха
Истори сивĕ кĕлĕ витес çук.
Вăл усрĕ хăй вутне нумайлăха.
Пăхăрпала тăхлан пăтрашăнса
Илемлĕ, çирĕп бронза пулнă пек
Çак хамăршăн ытараймн таса
Чĕлхемĕр те çухалмĕ пĕтĕмпех.
Ытти чĕлхесемпе пĕр хуранта
Вăл варăшĕ те пиçĕхĕ татах;
Юлашкинчен хытсах ларсассăн та,
Упранĕ, тен, тĕлĕнмелле сăмах.
Çак чĕлхенех вăйне пара-пара,
Поэт хăватлă шухăш хăварсан,—
Ун чапĕ кайĕ пĕтĕм çĕр тавра.
«Камран?» — тесессĕн, калĕç: «Чăвашран!»

1955